Социаллă хӳтлĕх

# Май пур таран пулăшма тăрăшатпăр

Патшалăх граждансен социаллă хӳтлĕх илме тивĕçлĕ категорийĕсене пур майсемпе те пулăшма тăрăшать. Кунта тĕрлĕ енлĕ пособисем панине те, санаторисемпе куруротсене, лагерьсене кайма путевкăсемпе тивĕçтернине те, укçан пулăшнине те, ытти çăмăллăхсем туса панине те кĕртмелле. Ку ĕçрен ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ те айккинче тăрса юлмасть. Ăна çак цифрăсемпе те çирĕплетме пулать.

Ачаллă çемьесене пособисемпе тивĕçтернинех илер. Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче 4001 ача валли пĕтĕмпе 10169,2 пин тенкĕ уйăхсерен пособи уйăрса панă. Çие юлнипе тата ача çуратнипе пособи илекенсем 87 çын пулнă, вĕсене 103,7 пин тенкĕ тӳленĕ. Ачасене çулталăк çурăччен пăхнăшăн 193 çын валли 696,3 пин тенкĕ уйăрнă, ача çуратнăшăн пĕр хут паракан пособие 33 çын пĕтĕмпе 242 пин тенкĕ илнĕ. Пĕтĕмпе санаторипе курорт путевкисене 12 уйăрнă.

«Ветерансем çинчен» Федераллă Саккуна пурнăçласси яланах тĕп вырăнта. Ку тĕллевпе çулталăк пуçланнăранпа 536,2 пин тенкĕпе усă курнă. «Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси» Федераллă Саккуна пурнăçласа вара 1421,1 пин тенкĕлĕх ветерансене пулăшу кӳнĕ. Чăваш Республикин «Вăрçă çулĕсенчи тыл ĕçченĕсемпе ĕç ветеранĕсене социаллă хӳтлĕх парасси» Саккунне пурнăçлама 8480,7 пин тенкĕ уйăрма пăхнă пулнă, 6497,6 пин тенкипе усă курнă. Вăл шутран пĕрлехи укçа тӳлевĕсем ĕç ветеранĕсене – 3775 пин тенкĕ, тыл ĕçченĕсене – 2789,2 пин тенкĕ, реабилитаци тунă çынсене – 518,7 пин тенкĕ, ялти специалистсене – 3095,2 пин тенкĕ.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Патшалăх Думине янă Çырăвĕнче çĕршыври демографи лару-тăрăвне лайăхлатма кирли, çемье пĕлтерĕшне ӳстермелли пирки тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Эпир те ку ыйтусене аякра тăратса хăварма шутламастпăр.

Çак вăхăта районта нумай ачаллă çемьесем 517, тулли мар çемьесем 772, пĕччен пурăнакан амăшĕсем 286, упăшкисенчен уйрăлнă ача амăшĕсем 177, инвалид ачаллă çемьесем 123, упăшкипе арăмĕ те инвалид çемьесем 6, пĕри инвалид çемьесем 133, йĕркеллĕ мар çемьесем 127.

Çулталăк пуçланнăранпа 2 инвалид ачана республикăри реабилитаци центрне вырнаçтарнă, ашшĕ-амăшĕ кирлĕ пек пăхман çемьесенчи 6 ачана ачасен «Золотой колос» вĕренӳ центрне тата сахал тупăшлă çемьесенчи 10 ачана ачасен «Белые камни» вĕренӳ центрне кайма майсем туса панă.

Йĕркеллĕ лару-тăрулла мар çемьесене тĕрĕслесех тăратпăр. Кăçал кун пек çемьесене 80 тĕрĕсленĕ. Пурнăç условийĕсем япăх çемьесенчи çул çитмен 24 çамрăка реабилитаци палатине вырнаçтарнă.

Районĕпе 11081 пенсионер шутланать. Вăл шутран вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем 209, вăрçăра упăшкисене çухатнă пĕччен хĕрарăмсем 54, тыл ĕçченĕсем 3138, ĕç ветеранĕсем 5621.

Районĕпе 785 ватă çын пĕччен пурăнать. Вĕсенчен 120 çынна килĕсенче пăхса пурăнаççĕ.

Адреслă пулăшу парассипе çавна палăртмалла. 2006 çулхи 7 уйăхра пĕччен пурăнакан ватă çынсемпе инвалидсенчен 34 заявлени килчĕ. Вăл шутран 10 çынна килĕсенче пăхса пурăнма тытăнтăмăр, ветерансен çурчĕсене 9 çынна вырнаçтартăмăр. Пĕчĕк тупăшлă 8 çемьене натураллă пулăшу центрĕнчен 20 пин тенкĕлĕх пулăшнă.

Социаллă тимлĕх кирлисем валли районта тĕрлĕрен мероприятисем тăтăшах ирттеретпĕр. Чи пĕлтерĕшлисенчен «Ачасем ячĕпе, ачасемшĕн» ыр кăмăллăх марафонне асăнса хăвармалла. Ăна кăçалхи январь уйăхĕнче ирттертĕмĕр.

«Инвалидсене физкультурăпа спорт тĕлĕшпе реабилитацилесси» социаллă проект планĕпе килĕшӳллĕн июнĕн 14-мĕшĕнче Элĕк ялĕнче Элĕкпе Муркаш районĕсенчи инвалидсем хушшинче спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Инвалидсем шашкăлла, шахматла выляссипе тата дартс енĕпе ăмăртрĕç. Пирĕн районтан 8 инвалид хутшăнчĕ унта. Пирĕн участниксем шашкăлла выляссипе пĕрремĕш, шахматла выляссипе иккĕмĕш, дартспа виççĕмĕш вырăнсене тивĕçрĕç.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче социаллă ĕçченсем хушшинче «Районти чи лайăх социаллă ĕçчен» професси ăсталăх конкурсĕ интереслĕ иртрĕ. 3 социаллă ĕçчен хутшăнчĕ унта. Вĕсем хушшинче мала тухса Валентина Николаевна Димитриева чи пултарулли пулса тăчĕ.

Кунсăр пуçне тĕрлĕрен уяв кунĕсем ячĕпе, ытти енлĕ мероприятисем те чылай пулса иртеççĕ.

Пĕр сăмахпа, социаллă хӳтлĕхсĕр çынсем хăйсене общество айккинче ан туйччăр, ыттисемпе танах шутлаччăр тесе хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшатпăр.

**Н. ПЕТРОВА,**
**ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

ГИБДД асăрхаттарать

# Çул çинче тимлĕрех пуласчĕ

Итрнĕ уйăхра Муркаш районĕнчи çулсем çинче 5 авари пулнă. Шел пулин те, çак аварисенче 5 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, 7ĕн аманнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, çул çинчи аварисем нумайланса пыни, çав хушăрах вĕсенче çынсем сарăмсăр вилесси чакманни пăшăрхантарать. Пĕлтĕр 7 уйăх хушшинче Муркаш енри çулсем çинче 28 авари пулнă: вĕсенче 7 çын вилнĕ, 42ĕн аманнă. Кăçал вара çак хушăра çулсем çинче 30 авари пулчĕ: 40 çын аманнă, 10ăн вилнĕ. Иртнĕ уйăхрисемпе танлаштарсан аварисен йывăрлăхĕ те ӳссе пырать. Ку уйăхри 15 кун хушшинче 8 авари: 9 çын аманнă. Пулса иртекен аварисенчен ытларахăшĕ Мускав-Хусан çул çинче.

Акă, августăн 5-мĕшĕнче Мускав-Хусан çулăн 617 километрĕнче, çул çинче хытă пынă пирки виçĕ машина аварине лекеççĕ, ЗАЗ-402, Газель, Митсубиси Патжеро. Газель (водителĕ С.А. Бабаян) пассажирĕсем А.З. Гасановпа Т.П. Бабаян, Митсубиси пассажирĕ С.В. Антонова аманса Муркаш больницине лекеççĕ.

Августăн 10-мĕшĕнче 2-мĕш сехетре Муркаш-Шупашкар çулĕ çинчи Москакасси тĕлĕнче Шупашкарта пурăнакан 1964 çулта çуралнă А.В. Андриянов КамАЗ автомашина çурма прицепĕпе ВАЗ-2105 машинăна пырса çапать. ВАЗ-2105 руль умĕнче ларакан Н.С. Иванов, 1976 çулта çуралнăскер, аманнипе больницăна лекет.

Çав кунах каçхи 10 сехетре Мускав–Уфа çулăн 605 километрĕнче, Çармăçкасси ялĕ патĕнче, 1948 çулта çуралнă В.А. Кириллов Мускав енчен Газель автомашинăпа пыраканскер, хирĕç килекен çул çине тухса Скания автомобильпе çапăнать. Гезель водителĕ В.А. Кириллов, шел пулин те, вырăнтах вилсе каять.

Пурнăç чи хаклă япала. Сирĕн пурнăçăр сирĕн аллăрта, çавăнпа та районти çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ сире пурне те çул çинче асăрханулларах çӳреме ыйтать.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă аттене, кукаçие Елшик ялĕнче пурăннă Максим Петрович Петрова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, нимĕнпе те виçме май çук çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Ярославка ял тăрăхĕн администрацине, ветерансене, тăвансене, пускилсене, ял-йыша чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

**Ачисем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления





ИНФОРМАЦИЯ ПО КАДРОВЫМ ВОПРОСАМ В КОНСУЛЬТАНТПЛЮС

Сегодня многие финансовые специалисты используют в своей работе справочноправовую систему КонсультантПлюс. В ней они могут найти ответы практически на любые вопросы о бухгалтерском учете и налогообложении. Кроме этого система содержит материалы и по смежным для бухгалтера темам. Сегодня мы расскажем о ресурсах КонсультантПлюс по кадровой тематике.

Специалисты, решающие кадровые вопросы, найдут в КонсультантПлюс:

- около 1000 консультаций в форме «вопрос-ответ»,
- свыше 1000 схем бухгалтерских проводок,
- свыше 5000 статей и 17 книг,
- свыше 1100 форм документов,
- свыше 360 комментариев трудового законодательства,
- другие полезные материалы.

КОНСУЛЬТАЦИИ В ФОРМЕ «ВОПРОС-ОТВЕТ»

В системе КонсультантПлюс (банки Финансист, Вопросы-Ответы) пользователи найдут около 1000 разъяснений в удобной форме «вопрос-ответ» по оформлению трудоустройства, начислению заработной платы, порядку предоставления и оформления отпусков, регулированию труда отдельных категорий работников, ответственности за нарушения трудового законодательства и т.д.

Консультации готовят специалисты министерств и ведомств, независимые эксперты. Кроме того, в системе бухгалтеры найдут разъясняющие письма профильных ведомств. В частности Минфина России, Федеральной налоговой службы, ФТС России. Все консультации обоснованы ссылками на нормативные документы, по которым можно перейти в тексты этих документов. Около половины консультаций подготовлено специально для пользователей КонсультантПлюс, их нет в других источниках информации.

***СХЕМЫ БУХГАЛТЕРСКИХ ПРОВОДОК***

Система КонсультантПлюс содержит схемы бухгалтерских проводок по конкретным ситуациям (банк КОРРЕСПОНДЕНЦИЯ СЧЕТОВ) с подробным описанием ситуации, нормативным обоснованием порядка бухгалтерского учета и налогообложения и таблицей проводок. Отметим, что в схемах рассматриваются ситуации, возникшие у специалистов на практике.

Бухгалтерам доступно свыше 1000 схем, в которых рассматривается порядок расчета заработной платы, отпускных (в том числе по дополнительным отпускам), больничных, а также иных компенсационных выплат работникам. В схемах подробно разъясняется, какие налоги организации следует заплатить по причитающимся работнику выплатам.

ПЕРИОДИКА И КНИГИ

Система КонсультантПлюс содержит в электронном виде материалы 76 специализированных бухгалтерских и финансовых изданий и 195 книг. Статьи по трудовому праву и кадровому учету в организациях содержат более 40 изданий, включаемых в систему. Среди них «Главбух», «Учет. Налоги. Право», «Финансовая газета», «Налоговый вестник», «Кадровая служба и управление персоналом предприятия». Эти журналы и публикации можно найти в банке «Приложение. Бухгалтерские Издания».

Кроме того, в системе пользователи найдут книги и тематические выпуски журналов, в которых подробно освещаются вопросы трудового законодательства.

Из них можно выделить:

- «Трудовые отношения: правовые основы регулирования, судебная практика», автор Николаев С.Н. (изд-во «Налоговый вестник», 2005),
- Тематический выпуск: Документальное оформление трудовых отношений (изд-во «Экономико-правовой бюллетень», 2006, N 3),
- Тематический выпуск: Трудовой договор (изд-во «Экономико-правовой бюллетень», 2006, N 7).

Всего в КонсультантПлюс специалистам доступно свыше 5000 статей и 17 книг по кадровой тематике.

ФОРМЫ ДОКУМЕНТОВ

Специалистам доступны должностные инструкции, трудовые договоры, индивидуальные контракты, приказы руководителя организации по кадровым вопросам, учетные формы организации по вопросам труда, образцы заявлений и расписок, составляемых работниками, и многие другие формы документов - всего свыше 1100 документов (банк Деловые Бумаги).

КОММЕНТАРИИ ТРУДОВОГО ЗАКОНОДАТЕЛЬСТВА

В систему КонсультантПлюс включаются консультации и комментарии по применению законодательства, в том числе трудового, на практике (банк КОММЕНТАРИИ ЗАКОНОДАТЕЛЬСТВА). Пользователи найдут постатейные комментарии к Трудовому кодексу РФ, а также статьи и книги известных авторов, в которых разъясняются сложные вопросы трудовых отношений - всего свыше 360 материалов. Среди них:

- «Настольная книга кадровика: юридические аспекты», авторы Орловский Ю.П., Нуртдинова А.Ф., Чиканова Л.А.;
- «Трудовые отношения в хозяйственных обществах», автор Карабельников Б.Р.;
- «Трудовой договор: заключение, изменение и прекращение. Практические рекомендации», автор Анисимов Л.Н.

Представлены также тематические статьи из 50 юридических изданий, в том числе из журнала «Трудовое право».

Для удобства пользователей в системе есть обзор ресурсов КонсультантПлюс по кадровой тематике. Быстро перейти к нему можно по ссылке «Кадровые вопросы» на вкладке «Обзоры» Окна поиска системы. Этот обзор поможет пользователям быстро найти необходимые материалы по трудовому праву в системе КонсультантПлюс.

Отметим, что бухгалтерам в КонсультантПлюс также доступны справочная информация, обзоры законодательства, судебная практика, в том числе по налоговым спорам, и другая полезная информация. Система КонсультантПлюс содержит свыше 2 миллионов документов - сегодня это наиболее полный источник информации, доступный пользователям справочных правовых систем для работы.

Подробную информацию о ресурсах КонсультантПлюс можно узнать, обратившись в региональный информационный центр Сети КонсультантПлюс.

***В Чувашии представителем Общероссийской сети распространения справочной правовой информации КонсультантПлюс является Региональный Информационный центр "Фирма "Элис".***

По вопросам приобретения и обслуживания систем Вы можете обратиться по адресу: г. Чебоксары, ул. Ярославская, д.58, Тел.62-35-15, факс. 62-10-83;

Заказать необходимый документ на "горячую линию" по тел: 62-33-78.

ФИРМА ЭЛИС

"Фирма "Элис" 13 лет вместе с вами!

**Грузоперевозки до 2 тонн. ГАЗель. Тел.: 60-610, 8-927-850-49-58.**

**Продаем подтоварники, жерди. Принимаем заказы, возможен бартер. Цена договорная. Тел.: 8-927-845-42-59; 8-906-130-18-33, д. Москакасы.**

**Кăвак сурăхпа кăвак така тата хура путек çухалнă. Куракансене тата пĕлекенсене Тăмкасси (Ихонькино) ялĕнчи Зоя Васильевăна пĕлтерме ыйтатпăр. Телефон: 8-906-131-55-68.**


**Паянхи номерĕн 3-6 стр. пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем заказ шучĕпе пичетленеççĕ.**

Нискассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта математика учителĕ пулса ĕçлекен З.И. Егорован ашшĕ

**Максим Петрович**
**ПЕТРОВ**

ĕçпе вăрçă ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3320.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 29.08.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.